Михаил Ставский

**Чăваш! чăваш!**

Чăваш! Чăваш! Хăш ĕмĕрте
Вăрру сан йăхăн сăмсаланнă?
Мĕнле шывра-шурта, çĕрте
Шăтса тухса вăл амаланнă?

Хăш чĕлхерен сăмах ЭТЕМ?
Тен, АДАМ мар-ши ун аслашшĕ?
Тен, чăвашсем хăйсем тетем?
Адамĕ, тен, чăваш аташĕ?

Мĕнле хирсем, шывсем, тусем
Чăваш йăхне куллен çул панă?
Камсем-ши пулнă сан туссем,
Кам хисепленĕ, кам хурланă?

Кирлех-ши çаксене пĕлме?
Хăвна хисеплесен, кирлех пуль.
Кирлех-ши тарăна кĕме?
Мала утас тесен, кирлех пуль.

Эппин шыра, тĕпче, чăваш, –
Паян пуриншĕн те çул уçă.
Ĕнерхилле ан пул йаваш –
Хастарлăхран пулайĕ усă.

*Ставский, М. Чăваш! Чăваш! / М. Ставский // Тăван Атăл . – 1995. – №6. – С. 52.*